# ÇĔНĔ CĂВĂCЕM

## В. Давыдов-Анатри

### ЛЕНИН

Кам ал пачĕ пире ӳкесрен,
Кам хăтарчĕ пире çĕр пӳртрен? —
Ленин.

Кам-ха уçрĕ куçа пирĕнне,
Пурнăç пачĕ чăваш çыннине? —
Ленин.

Кам кăтартрĕ сӳнми хĕвеле
Тус-йышпа кун курмашкăн пĕрле?—
Ленин.

Кам çĕклерĕ пире тӳпене,
Кам çитерчĕ тĕнче уçлăхне?—
Ленин.

### ВУТРА ТА ÇУНМАРĂМ...

Вутра та çунмарăм,
Шывра та путмарăм,—
Çĕршыва савнăран,
Халăхпа пулнăран.

Çапсан та ӳкмерĕм,
Персен те вилмерĕм,—
Партие шаннăран,
Ленинпа утнăран.

### РАÇÇЕЙ

Раççей тесессĕн, куç умне
Тухаççĕ шурă хурăнсем.
Савса çĕклеççĕ чĕрене
Сергей Есенин сăввисем.

Раççей тесессĕн, куç умне
Тухаççĕ çывăх тусăмсем.
Чун-чĕреме кичем чухне
Мана вăй-хал пиллен
çынсем.

Раççей тесессĕн, куç умне
Тухаççĕ паттăр салтаксем.
Тăван çĕршыв вутра чухне
Пуç хунă, вилнĕ тантăшсем.

Раççей тесессĕн, куç умне
Тухать тăван атте-анне.
Куратăп Ленин сăнарне,
Мĕнпур этемлĕх хĕвелне.

### ЭПИР ÇĔН ĔМĔР КАЧЧИСЕМ

Сим-пыллă туслăх куркине
Йăтар-и, хаклă тантăшсем,
Çула тухатпăр ирхине
Эпир, çĕн ĕмĕр каччисем.

Совет салтакĕн тивĕçне
Хурас чĕремĕр варрине:
Тăшман ан пăстăр ĕмĕрне
Тăван çĕршывăн чиккине.

Çырсамăр ăшă саламсем,
Эсир, маттур чипер хĕрсем.
Манмастпăр эпĕр чикĕре,
Чун çумĕнчи туссем, сире.

Атте-аннемĕр пиллĕхне
Ялан асра тытса çӳрес.
Вĕçен мухтавлă ыр ятне
Савса упрас, çӳле çĕклес.

### МАНА, ОКТЯБРЬ ТАНТĂШНЕ

Тухать сăмахăм чĕререн,
Мĕн ыррине аса илсен:
Çĕршыв, эс кĕртрĕн çын шутне
Мана, Октябрь тантăшне.

Халь, ак, эп иртрĕм тĕпеле,
Паратăп алă хĕвеле.
Çĕршыв, эс йăтрăн тӳпене
Мана, Октябрь тантăшне.